# Аслă Çĕнтерӳпе саламлатпăр!

Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

*34 (7888) №* ✻ *Шăмат кун, 2011 çулхи май (çу) уйăхĕн 7-мĕшĕ* ✻ *Хакĕ ирĕклĕ*


## «Ветерансене пулăшасси – пирĕн тивĕç»

***66 çул каялла Аслă Çĕнтерĕве çывхартнисем, шел пулин те, паян сахаллансах пыраççĕ. Анчах та вĕсен йывăр кун-çулĕ пирки пирĕн, çамрăксен, манма юрамасть. Совет салтакĕсем çĕр-шыв пуласлăхĕшĕн, пирĕн çутă кун-çулшăн пуç хунă, йывăр сурансемпе киле таврăннă... Çавăнпа ветерансене хисеплесси, пулăшасси, вĕсен аса илĕвĕсене историре хăварасси – пирĕн тивĕç.***

***Эпир, Муркашри вăтам шкулта 9 «а» класра вĕренекенсем, район центрĕнче пурăнакан Марья Прохоровнăпа Георгий Арсентьевич Мартыновсен çемйипе питĕ туслă. Класс ертӳçи О.И. Михайлова хавхалантарнипе çак хисеплĕ çемьене тăватă çул тăтăшах пулăшса тăратпăр, вĕсен аса илĕвĕсене манăçа тухма памастпăр. Вăрçă ветеранĕпе ĕç ветеранĕ патĕнче çак кунсенче те пултăмăр – Çĕнтерӳ кунĕпе саламласа паянхи пурнăçшăн тав турăмăр.***

***9 «а» класра вĕренекенсем.***



## «Çĕнтерĕве чысланăшăн тав»

Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕ Иван Алексеевич Васюхин Юнкăпуç тăрăхĕшĕн те, Муркаш еншĕн те паллă çын.

1924 çулта çуралнă арçын тăванĕсемпе сыв пуллашса 1942 çулхи çурла уйăхĕн 23-мĕшĕнче фронта тухса кайнă. Пирĕн ентеш оруди батарейинче хĕрлĕ армеецран 76 мм орудисен батарейин командирне çитнĕ. Çапăçу хирĕсемпе тухса 1943 çулта аманнă...

Фронт талккишпех пынă хаяр çапăçусенче Иван Алексеевич орденсемпе медальсене тивĕçнĕ. 1944 çулхи утă уйăхĕн 13-мĕшĕнче Волын облаçĕнчи Изерц хулишĕн пынă çапăçусенче хăйсен самоходкăллă орудийĕпе пирĕн ентеш расчечĕ фашистсен «Фердинанд» танкĕпе тӳрремĕнех çапăçăва кĕнĕ: танк тĕтĕм йăсăрлантарса пĕр вырăнта «хытса» ларнă. Çакăнпа пĕрлех артиллеристсем тăшманăн 30 салтакне тĕп тунă. Çакăншăн И. Васюхина 3 степень Мухтав орденĕпе наградăланă.



1945 çулхи çуркунне Котбус хулишĕн пынă хаяр çапăçусенче те Юнкăпуç каччи паттăрлăх кăтартнă. Кунта вăл тăшманăн 4 контратакине сирсе яма хутшăннă. И. Васюхин командирăн расчечĕ тăшманăн пулемет точкине тата 23 фашиста тĕп тунă. Ку паттăрлăхшăн та пирĕн ентеш 3 степень Мухтав орденне тивĕçнĕ.

1945 çулхи пуш уйăхĕн 15-мĕшĕнче Белачув хулине илессишĕн пынă çапăçусенче 270-мĕш стрелковăй полкĕн 76 мм орудисен батарея расчечĕ нимĕçсене йышлă тĕп тунă. Çакăншăн ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе чыс тунă.

1945 çулхи пуш уйăхĕн 10-мĕшĕнче пирĕн ентеше фашистсен вăйлатнă ушкăнне тĕп тума хутшăнса паттăрлăх кăтартнăшăн «Паттăрлăхшăн» медальпе наградăланă.

«Аслă Çĕнтерĕве чысланăшăн тав. Эсир çакна тивĕçлĕ тума пултарни çĕр-шыв ирĕклĕхĕшĕн миллионшар çын юн тăкнине шута хуни пулать», – терĕ Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕ.

**Сăн ӳкерчĕкре эсир Иван Алексеевич Васюхин ветерана шалти ĕçсен пайĕнчи следстви уйрăмне ертсе пыракан Иван Алексеевич Васюхин мăнукĕпе куратăр.**

**А. БЕЛОВ.**

## Уяв мероприятийĕсене пăхма

Чăваш Ен тĕп хулинче майăн 9-мĕшĕнче Хĕрлĕ площадьре 12 сехетре Аслă Отечественнăй вăрçăра Çĕнтерӳ тунăранпа 66 çул çитнĕ ятпа митинг пулать тата Шупашкар гарнизонĕн подразделенийĕсен пĕрлештернĕ полкĕпе çар техники иртеççĕ. Мероприятисене тӳрремĕн кăтартассине Чăваш Республикин влаç органĕсен официаллă порталĕнче (www.cap.ru) йĕркелеççĕ.

Уяв мероприятийĕсене 12 сехетре Чăваш Наци радио «ВТК-информ» тата «Канал 5 плюс» эфирта трансляцилеме пуçăнать. Тулли версие 14 сехетрен тытăнса 15 сехетчен «Россия-24» канал эфирĕнче (тепĕр хут 19 сехет те 30 минутра), «Канал 5 плюс» тата «ВТК-информ» каналсен эфирĕнче 20 сехетре пăхма май пулĕ.

Мероприятисене трансляцилессине «Чувашия» патшалăх телерадиокомпанийĕ йĕркелет. Унăн сайчĕ çинче уяв парачĕпе çыхăннă пĕтĕм аудио- тата видеоматериала вырнаçтараççĕ. «Радио Чувашии» корреспонденчĕсем уяв мероприятийĕсем пирки ятарлă кăларăмсем хатĕрлеççĕ. Вĕсем майăн 9-мĕшĕнче 6 сехет те 17 минутра, 7 сехет те 11 минутра, 12 сехет те 10 минутра, майăн 10-мĕшĕнче 7 сехет те 11 минутра эфира тухаççĕ.

**ЧР Президент Администрацийĕн пресс-служби.**

## Çĕнĕ технологисемпе усă курса

Майăн 3-мĕшĕнче ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ О.В. Макаров тата унăн çумĕ – республика ял хуçалăх министрĕ С.В. Павлов пирĕн районта пулнă, район администрацийĕн пуçлăхĕпе Ю.А. Ивановпа пĕрле «Сеспель» предприятие çитсе курнă. «Сеспель» ЗАО генеральнăй директорĕ В.А. Бакшаев тата предприятин тĕп инженерĕ В.А. Бирюков хăнасене хăйсем хатĕрлекен продукципе, ĕç условийĕсемпе паллаштарнă.

«Сеспель» – çăмăл мар условисенче те тăнăç аталанса пыракан предприяти. Ю.А. Иванов палăртнă тăрăх районĕпе кăçалхи пĕрремĕш кварталта 385,7 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Ку кăтарту иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен 1,9 хут пысăкрах. «Сеспельте» кăна продукци туса кăларасси 3,5 хут ӳснĕ, пĕтĕмпе 267,7 миллион тенкĕпе танлашнă.

Кунта туса кăларакан автомашинăсен цистерна çурма прицепĕсене республикăри кăна мар, ытти регионсенчи предприятисем те туянаççĕ.

Республика Министрсен Кабинечĕн Председателĕ О.В. Макаров тĕрлĕ сĕнӳсем панă, вăл шутра «Промтрактор» уçă акционер обществи валли чукун çул платформисен цистернисене хатĕрлессипе, «Ренова» компанийĕсемпе ĕçлĕ çыхăнусем йĕркелессипе те.

**Хамăр инф.**

**ТĂВАН ÇĔР-ШЫВĂН АСЛĂ ВĂРÇИН ХИСЕПЛĔ ВЕТЕРАНĔСЕМ ТАТА ТЫЛ ĔÇЧЕНĔСЕМ!**

Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 66 çул çитнĕ ятпа сире чĕререн саламлатăп!

Çĕнтерӳ кунĕ – аслă уяв. Эпир çак кун Раççейĕн кашни çыннин ирĕклĕ çĕр-шывра мирлĕ тӳпе айĕнче пурăнма пултарассин правине сыхласа хăварнисене чыслатпăр. Хăйсен вилĕмсĕр паттăрлăхĕпе хăюлăх, хăйсен пурнăçне шеллеменнин, çирĕплĕх тата Тăван çĕр-шыва юратнин тĕслĕхĕ кăтартнисене эпир сума сăватпăр тата яланах асра тытатпăр.

Майăн 9-мĕшĕ пирĕншĕн кашни çулах юбилей уявĕ. Ăшă та хумхануллă кăмăл-туйăмпа эпир пĕр вăхăт шăп тăрса çитес ăрусен ырлăхĕшĕн, пĕтĕм тĕнчери пурнăçшăн хăйсен пурнăçне панисене хисеплесе асăнма вĕçĕм çунакан çулăм патне утатпăр.

Кашни килтех паян ашшĕсемпе аслашшĕсен паттăрлăх тĕслĕхĕсене аса илеççĕ. Пирĕн çĕр-шывра вăрçăн йывăр хуйхи-суйхи пырса тивмен пĕр çемье те çук. Фронтра та, тылра та мĕн пур вăйпа Аслă Çĕнтерĕве туптанă. Вăл туслăх, ирĕклĕх тата ырăлăх символĕ пулса тăнă!

Тăван çĕр-шыва çапăçу хирĕнче хӳтĕленĕ тата тылра пĕтĕм вăйран тăрăшнă пирĕн ентешсем кашниншĕнех салтакăн чăн-чăн паттăрлăхĕн, кăмăл-туйăмăн пысăк вăйĕн, пысăк хăюлăхăн тата хăйсене хăйсем хĕрхенменнин тĕслĕхĕ пулса тăраççĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ пирĕнпе юнашар çук ĕнтĕ... Яланах асра тытса эпир вĕсен умĕнче çĕре çити пуç таятпăр.

Республикăра пурăнакансене пурне те Çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе саламлатăп! Пурсăра та çирĕп сывлăх, ăнăçу, мир тата ырă кăмăл сунатăп!

**М. ИГНАТЬЕВ,**
**Чăваш Республикин Президенчĕ.**

**ТĂВАН ÇĔР-ШЫВĂН АСЛĂ ВĂРÇИН ВЕТЕРАНĔСЕМ, САЛТАК АРĂМĔСЕМ, ТЫЛ ĔÇЧЕНĔСЕМ, ВĂРÇĂ АЧИСЕМ, ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!**

Сире Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 66 çул çитнĕ ятпа пĕтĕм чун-чĕререн саламлатăп!

Эсир чи хаяр та хăрушă, чи нумай юн юхнă вăрçăра тăшмана çапса аркатрăр. Хăвăрăн пурнăçăра шеллемесĕр Тăван çĕр-шывăмăрăн ирĕклĕхĕпе чысне, никама пăхăнманлăхне сыхласа хăвартăр. Ытти çĕр-шыв çыннисемпе пĕрле Европăри нумай халăха фашизмăн пусмăрĕнчен хăтартăр, çĕр çине мирлĕ пурнăç илсе килтĕр.

Тылра та ватти-вĕтти кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлерĕ, тăшмана çапса аркатма, Çĕнтерĕве çывхартма пулăшрĕ.

Кашни çемьере, кашни çынра вăрçă хăйĕн хура йĕрне хăварчĕ. Пирĕн районтан кăна çак хăрушă вăрçа 9845 çын тухса кайнă. Вĕсенчен 5491-шĕ каялла таврăнайман. Шел пулин те, сайралансах пырать вĕсен речĕ. Паян районта вăрçăн 100 ветеранĕ, вăрçăра вилнĕ салтаксен мăшăрĕсем 10-ăн пурăнаççĕ. Тăван çĕр-шывшăн пуçне хунă салтаксем ĕмĕр-ĕмĕр пирĕн чĕрере. Вĕсен умĕнче, Çĕнтерӳпе таврăннă салтаксемпе тыл ĕçченĕсен умĕнче эпир çĕре çити пуç таятпăр. Тавах сире Аслă Çĕнтерӳпе паянхи телейлĕ пурнăçшăн.

Çĕр-аннемĕр урăх нихăçан та вăрçăн хура пĕлĕчĕсемпе ан хуплантăр тесе хамăртан килнине йăлтах тумалла пирĕн. Тăван район, республика, çĕр-шыв аталанăвĕшĕн кунран кун çитĕнӳллĕрех вăй хумалла. Çамрăк ăрăва мĕн пĕчĕкрен сирĕн пек паттăр та хăюллă, вăйлă та чăтăмлă пулма вĕрентмелле. Сире кура пирĕн ачасемпе мăнуксем те Тăван çĕр-шыва юратма вĕренччĕр, унăн пуласлăхĕшĕн яваплăха туйса ӳсчĕр.

Хаклă çыннăмăрсем! Сире çирĕп сывлăх, телейлĕ те вăрăм кун-çул сунатăп. Тата нумай-нумай çул пурăнăр. Çывăх çыннăрсем яланах юнашар пулччăр.

**Ю. ИВАНОВ,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕ.**


**Государственная страховая компания**
**Поддержка**

ОАО ГСК «Поддержка» сердечно поздравляет всех жителей Чувашской Республики с Днем Победы!

Низкий поклон, бесконечная благодарность и признательность фронтовикам и труженикам тыла, вынесшим на своих плечах все лишения и тяготы войны, за свободу и мирное небо над головой, и всем тем, кто внес весомый вклад в послевоенное хозяйственное и культурное строительство!

Ваш жизненный путь – это яркий пример беззаветного служения Отечеству и народу, истинной любви к Родине, стойкости и силы духа, самопожертвования и веры в торжество добра.

В этот прекрасный праздничный день от души желаем крепкого здоровья, благополучия, счастья и любви!



# «Снарячĕ 96 килограмм таятчĕ»

***Отечествăлла вăрçăн 2 степеньлĕ орденĕ, «Паттăрлăхшăн», «Берлина илнĕшĕн», «Çапăçури паллă ĕçсемшĕн» медальсем тата ытти нумай-нумай награда пуррипе Геннадий Васильевич Савельев тивĕçлипех мăнаçланма пултарать.***



Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçланнă чухне вăл пысăк пурнăç çулĕ çине тухнă кăна-ха – 17 çул тултарнă. 1942 çулхи сентябрь уйăхĕнче вара Шурча каччине çара илеççĕ. Çапла вĕсем тăван ялта пĕрле выляса ӳснĕ юлташĕпе Алексей Даниловпа Ижевскри çар училищинче вĕренме тытăнаççĕ. Училищĕрен выпуск пулмасть, курсантсене Смоленскри пехота училищине куçараççĕ. Унтан – стрелоксен 272-мĕш саппас полкне.

«Çав çулхинех хĕлле пирĕн ротăна Мускава илсе кайрĕç – минометсен 2-мĕш гварди бригадине. Февраль уйăхĕнче уйрăм бригада йĕркелерĕç. Эпир, çав бригадăна лекнисем, тăшмана «Андрюшăсемпе» переттĕмĕр. Пĕр снарячĕ 96 килограмм таятчĕ. Ăс-тăнпа пĕрле вăй та самаях кирлĕччĕ», – каласа парать паян вăрçă ветеранĕ.

Чи йывăр çапăçу пирки ыйтсан Геннадий Васильевич тӳрех Курск пĕккине аса илет. «Çав çапăçура пулнă çын вĕсене нихăçан та манаймасть», – тет вăл татăклăн.

Суранĕсем вара чĕрере кăн мар ветеранăн. Сталинград патĕнчи çапăçу вăхăтĕнче сылтăм урине осколок лекнĕрен Геннадий Васильевича госпитале ăсатаççĕ. Сипленнĕ хыççăн вăл Карели фронтне лекет. Фашист аллинчи хуласене ирĕке кăларма хутшăнса Берлина çитет паттăр чăваш салтакĕ. Çĕнтерӳ кунне унта кĕтсе илет.

Хыççăнах киле таврăнма май килмест унăн: Германире йĕрке тытса тăма хăварнисен ретĕнче вăл та пулать. Геннадий Васильевича тăван килĕнче 1946 çулхи декабрьте кĕтсе илеççĕ...

Паян вара вăрçă салтакĕ хăйĕн мăшăрĕпе Юлия Ивановнăпа пĕрле мăнукĕсемпе йăпанать çеç мар, хастар ветеран çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатассипе тăрăшать: иртнĕ кунсенче вăл алла свидетельство та илчĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Паян – Радио, Çыхăну отраслĕн ĕçченĕсен кунĕ**

**ÇЫХĂНУ ОТРАСЛĔН ĔÇЧЕНĔСЕМПЕ ВЕТЕРАНĔСЕМ!**
**РАДИО ĔÇĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире професси уявĕ – Радио тата пур çыхăну отраслĕнче ĕçлекенсен кунĕ ячĕпе саламлатăп.

Сирĕн ĕç общество пурнăçĕпе тачă çыхăннă. Паян информаци технологийĕн ĕмĕрĕнче пурăннă май Интернетпа тата мобиллĕ çыхăнупа усă куракансен йышĕ кунран кун ӳссе пырать. Çакă кулленхи пурнăç йĕркин уйрăлми пайĕ пулса тăчĕ. Паян çыхăну хатĕрĕсемсĕр обществăн политика, экономика, культурăпа социаллă аталанăвне палăртма та йывăр. Юлашки вăхăтра предприятисемпе организацисенче, учрежденисенче документсемпе электронлă майпа ĕçлесси вăй илсе пырать. Сиплев учрежденийĕсене те врачсем патне ниçта тухмасăр черете çак майпах çырăнма пултаратпăр. Çакă вăхăта перекетлеме те, хамăра кирлĕ хыпара кĕске вăхăтрах илме те май парать. Оперативлă тата тĕрĕс информаци вара пире пурнăçра тĕрĕс утăмсем тума пулăшать.

Хăвăр ĕçĕре юратни, ĕçшĕн çунса тăни сире малашне çĕнĕ ӳсĕмсем тума пулăшса пыччăр. Электронлă çыхăнăва аталантарассинче, унпа усă куракансен йышне ӳстерес ĕçре эсир çĕнĕ утăмсем тăвасса шанатăп. Пурсăра та çирĕп сывлăх, ăнăçу, телей сунатăп.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

# Вăрçă хирĕнче те, мирлĕ ĕçре те

**Çапла, вăрçă тени çухатусемсĕр, терт-асапсăр, тăварлă куççульсĕр пулмасть. Аслă Отечественнăй вăрçă кӳнĕ сурансем, унтанпа 66 çул иртрĕ пулин те, тӳрленеймеççĕ. Ытла та хакла ларчĕ вăл пирĕн халăхшăн. Çĕршер те пиншер çемьере хăйсен мăшăрĕсене, ашшĕсене, пиччĕшсемпе шăллĕсене, ачисене вăрçă хирĕнчен таврăнасса кĕтсе илеймерĕç.**



Акă Йӳçкасси ял тăрăхĕн территорийĕнчи ялсенчен 746 çынна фронта ăсатнă. Вĕсенчен 448 салтака тăван киле таврăнма шăпа пӳрмен. Епле пысăк хуйхă.

Тури Панкли ялĕнче 1924 çулта çуралса ӳснĕ Павел Кузьмич Кузьминăн та пурнăç çулĕ çак хăрушă вăрçăпах çыхăннă. Панкли шкулĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн вăл Çĕмĕрле районĕнче ФЗО шкулне вĕренсе пĕтернĕ. 1942 çулхи август уйăхĕнче ăна çар ретне илнĕ.

Павел Кузьмич иккĕмĕш Украина фронтне лекет. Кунта вăл минометчик пулса çапăçать. Турри сыхланă пулĕ çав ăна. Тăшманпа пынă хаяр çапăçусенче икĕ хутчен аманать пулин те чĕрех юлать. Иккĕмĕш ушкăн инваличĕ пулса тăван яла таврăнать.

Фронтовик киле таврăнсан та инвалид тесе алă усса ларма шутламасть, пĕрлешӳллĕ хуçалăхра ĕçе кӳлĕнет. Малтанхи вăхăтра ăна уй-хир бригадине ертсе пыма шанаççĕ. Чун туртнипе, вăхăт ыйтнипе шанса панă ĕçе ответлăха туйса пурнăçлама тăрăшать.

Пурнăç тăршшĕпе ытти ĕçсенче те тăрăшма тивет унăн. Хуçалăхри ферма коллективне те ертсе пырать, рабочи те, платник пулса та, тимĕрçĕре те чылай çул вăй хурать.

– 66 çул ĕнтĕ мирлĕ тӳпе айĕнче пурăнатпăр. Çакăнтан пахи, пĕлтерĕшли мĕн пултăр. Ирĕклĕн ĕçлеме, савăнса пурăнма май пур. Эпир вăрçă вутне кĕнĕ чухне кун пирки ĕмĕтленме пултарнă кăна, – савăнăç куççульне пытараймасть 87 çулхи фронтовик ветеран.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

# «Эпир те çĕнтерĕве çывхартнă»



**Манăн асаттене Валериан Игнатьевич Чернов тесе чĕнеççĕ. Вăл 1924 çулхи чӳк уйăхĕн 21-мĕшĕнче Кăпас ялĕнче çуралнă. Шкулта пĕлӳ илнĕ хыççăн вăл çĕвĕçсен курсĕнче çĕлĕксем çĕлеме вĕреннĕ. Аслă Отечественнăй вăрçă пуçланнă вăхăтра чугун çул çинче заводра хурçă шăратнă çĕрте вăй хунă. Вăрçă хыççăн колхозра тăрăшнă. Эпĕ сире асаттен аса илĕвĕсемпе паллаштарасшăн.**

«Фронтра пулма тӳр килмерĕ, – çапла пуçларĕ хăйĕн калаçăвне асатте. Июнĕн 21-мĕшĕнче шкул пĕтернĕ ятпа йĕркеленĕ каçра ташларăмăр. Шурăмпуçне хĕрсемпе каччăсем пĕрле кĕтсе илтĕмĕр. Ир енне çеç киле салантăмăр. Вăранасса вара аннен пăлханчăк сассине илтсе вăрантăм: «Тăр, ывăлăм, вăрçă пуçланнă. Нимĕçсем пирĕн çĕр-шыва тапăннă».

Манăн та, 18 çулхи каччăн, хамăн тантăшсемпе пĕрле тăшмана хирĕç хăрушă çапăçу хирне çитсе курас килетчĕ. Шел пулин те мана çар службине вăрçă хирне мар, 1941 çулхи июлĕн 15-мĕшĕнче çар ĕçне вĕренме пĕрремĕш пухупа 5 номерлĕ ФЗО шкулне Комсомольск-на-Амуре хулине ăсатрĕç.

Эпир Сĕнтĕр районĕнчен инçе çула 250 çын кайрăмăр. Пире Канаш хулинче пĕр пуйăса 750 çын вырнаçтарчĕç. Сывлăш çитменнипе хăшĕ-пĕри тăн çухататчĕ. Пурнăç нушалансах пычĕ. Пирĕн эшелонран йывăрлăха чăтайманран пилĕк çын тарма пикеннĕ, анчах та командирсем таркăнсене кĕске вăхăтрах тытса арестленĕ, вăрçă трибуналне панă.

1942 çулта Буреновскри геологи разведкин партинче платник ĕçне, ун хыççăн Сучановск хулинчи геологи разведкинчен тимĕрçĕсен курсне вĕренсе пĕтертĕм. Çапла вара Совет Çарне валли тимĕр шăратса хĕç-пăшал хатĕрленĕ çĕрте вăй хутăм. Çавăнпа та пире «броня армии по приказу Сталина» тесе калатчĕç.

Çĕр-шыв пĕрлĕхлĕ çар лагерĕ пулса тăчĕ. Фабрикăсемпе заводсене нумайăшне хĕвел тухăçне куçарса кайрĕç. Унта çар продукцийĕ кăларма тытăнчĕç. Эпĕ те çав ĕçре талăкĕ-талăкĕпе вăй хунă, çĕнтерĕве çывхартма нумай пулăшнă.

Пурте кĕтнĕ Çĕнтерӳ кунĕ тинех çитрĕ. Пулнă çулăм, пулнă вилĕм. Пулнă пурте: хăрушлăхĕпе куççулĕ те. Вилĕмпе те куçа куçăн тĕл пулнă, анчах пурнăçа юратни, хамăра хамăр шанни тăшмана çĕнтерме пулăшрĕ те. Эпир пĕрлехи тăрăшулăхпа, вăй-хăватпа çак вăрçăра никам парăнтарайман тăшмана çĕнтертĕмĕр. Вăрçă хыççăн паттăр та ĕçчен халăхпа пĕрле эпĕ тăшман аркатса пĕтернĕ хуласемпе шахтăсене, чугун çулсене юсанă çĕрте вăй хутăм.

Тăван хуçалăх, юратнă ял вăй илтĕр, çĕр-шыв каллех пуян та тĕреклĕ пултăр тесе эпир пурте, тăван яла каялла сывă таврăннисем, çине тăрса хастаррăн ĕçлеме пуçларăмăр. Тивĕçлĕ канăва тухнă хыççăн та алă усса лармарăм, хама шанса панă ĕçе пурнăçлама тăрăшрăм. Халĕ вара сывлăх хавшарĕ пулин те хамăн мăнуксемпе савăнса татах та пурăнас килет», – тесе вĕçлерĕ хăйĕн калаçăвне Валериан Игнатьевич.

**К. МИХАЙЛОВА.**

# Палăксене тимлĕхсĕр хăвармарăмăр

Ырă ĕçсен эрнинче Муркашри вăтам шкулта пурнăç вĕресе кăна тăчĕ. Директор çумĕ Е. Ефанова, О. Минаева тата Э. Яковлева вожатăйсен пуçарулăхĕпе çак эрне валли ятарлă ĕç планĕ хатĕрлерĕç шкулта, ăна пăхăнса пычĕç.

Эрне пуçламăшĕнчех 5 «в» тата 8 «в» классем ырăлăх пирки калаçрĕç. Саккăрмĕшсем тест урлă çак туйăм хăйсенче мĕнле шайра пулнине те пĕлчĕç.

Тимуровецсен отрячĕсем чылай ватă çын патне çитсе пулăшу пачĕç. Акă «Туслă» отряд Хорнуйĕнчи Л.Ф. Николаевăна кил картишĕнче юр ывăтса пулăшрĕ. Ачасем тислĕк те тасатса пачĕç, тĕп сакайĕнчен çĕр улми те кăларса хучĕç. Çурлатри ялĕнче пурăнакан В.В. Тодинова патне те çитрĕç ачасем. Унта вара хуçалăхри ĕçсене туса пулăшнă май пӳртри сĕтел-пукана та юсаса хăварчĕç. «Туслă» отряд ачисемех – А. Харьков, А. Димитриев, С. Иванова, Е. Гордеева, Я. Николаева, К. Охотникова тата М. Грачева – Хорнуй ялĕнчи палăк територине те тирпейлерĕç.

6 «в» класра вĕренекенсем вара Шаптак ялĕнче пурăнакан А.Г. Казаков патĕнче пулчĕç. Вĕсем те ветерана пулăшу пачĕç. Педагогика ĕçĕн ветеранĕпе В.Ф. Максимовăпа 6 «а» класс вĕренекенĕсем тĕл пулса ăна пӳртре тирпейлеме пулăшрĕç.



Ырă ĕçсен эрнинче эпир шкул тата ун çумĕнчи территорие çӳп-çапран тасатса тирпей-илем кĕртессипе тăрăшрăмăр кăна мар, Çĕнтерӳ кунĕн уявнеирттерме те хатĕрлентĕмĕр. Ачасем Тойкилтĕре Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче пуç хунисене асăнса лартнă монумент тавра та, Кашмашри палăк патĕнче те тирпейлерĕç. Мăн Токшик ялĕнчи палăк тавра çӳп-çап пуçтарассипе те Муркаш шкулĕнче вĕренекенсем тăрăшрĕç. Пирĕн шкул ачисем тăрăшнипе халĕ Çатракассинчи палăк патĕнче те тирпейлĕ.

Ырă ĕçсен эрнинче «Путене» тата «Солнышко» ача сачĕсене те çитрĕç пирĕн вĕренекенсем. Шăпăрлансемпе вăйă сехечĕсем ирттерчĕç, кĕнеке тĕнчипе паллаштарчĕç.

Кайăксене те пулăшма манмарĕç ачасем: шăнкăрчсем валли вĕлле чылай хатĕрлесе çакрĕç. Уйрăмах пуçламăш классенче вĕренекенсем хастар пулчĕç.

Ачасемпе учительсем пурнăçланă пур ырă ĕçе асăнса пĕтереес те çук. Ырă ĕçсем тума, уйрăмах ватă çынсене пулăшма вара ятарлă эрнере кăна мар, ытти кунсенче те манас марччĕ.

**Е. ВАРЛАМОВА,**
**8 «в» класс ертӳçи.**

# Асăну хăми уçăпăр

Иртнĕ çул Аслă Отечественнăй вăрçăра Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнине халалласа Чуманкасси ял тăрăхне кĕрекен Якаткасси ялĕнче вăрçă хирĕнчен каялла таврăнайман ентешсене асăнса обелиск уçнăччĕ. Çак пархатарлă ĕçе Е.Г. Васильев, В.К. Гордеев, Н.А. Игнатьев, Ю.Г. Герасимов, О.А. Соловьев пысăк тӳпе хыврĕç.

Ку ĕçпе çеç çырлахас темерĕ çак пуçару ушкăнĕ. Çак ялта çуралса ӳснĕ чĕлхеçĕ ăсчаха, чăваш чĕлхин тĕпчевçине, чăваш чĕлхине вĕрентессипе пур классем валли те хатĕрленĕ тĕрлĕ учебниксемпе пособисен авторне Федор Тимофеевич Тимофеева халалласа асăну хăми уçас терĕç вĕсем. Ялти пĕр урама та унăн ятне панă вĕт-ха.

Ку асăну хăмине кăçалхи майăн 8-мĕшĕнче уçма палăртнă. Çав ятпа ирттерекен савăнăçлă мероприятире ученăйăн пархатарлă ĕç-хĕлне аса илĕç, вăрçăра вилнисене пуç тайĕç, обелисксем патне чечек кăшăлĕсем хурĕç. Кунпа пĕрлех пултарулăх ушкăнĕсем хăйсен ташши-юррипе савăнтарĕç. Ытти мероприятисем те ирттерме палăртнă. Пурне те унта йыхравлатпăр.

**В. ГОРДЕЕВ.**

# Кил тата хушма хуçалăх



# Çĕнтерĕве тылра çывхартнă



Вăрçă ачисем

***Ĕçлĕ Хĕрлĕ ялав орденĕн кавалерĕ, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ял хуçалăх ĕçченĕ Римма Михайловна Петрова 80 çул тултарнине пĕлсен юбиляр патне килнех çитсе килме шутларăм.***

***... Районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцири профсоюз комитечĕн председателĕпе А. Толикинăпа Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи Катăкуй ял хĕрринчи кил хапхи патне çитсенех пысăк йытă хулăн сас пачĕ. Йĕркеллĕ хуçан йытти те тулли праваллă çемье членĕ тесе калаçса тăнă хушăра пачалăк умне çулĕсем пуррине пăхмасăрах пурнăç илемне çухатман арçын тухрĕ. Ку вăл – çемье пуçĕ Алексей Петрович Петров.***

**ОРДЕНÇĂСЕМ**

– Мăшăрăм тĕпел кукринче ытларах ĕç тутăр-ха тесе сарайĕнче тăракан сурăхсене апат пама тухрăм. Чăххисене те пăхмалла. Акă тата хăнисене те кĕтсе илмелле пулчĕ, – терĕ пире пӳртелле иртме чĕнсе районăн хисеплĕ гражданинĕ. Çак пысăк чыса А. Петров ыт ахальтен тивĕçмен. Октябрь революцийĕн, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав, Халăхсен туслăхĕн орденĕсен, «Хисеп Палли» орден кавалерĕ Мичурин яч. хис. хуçалăха, Муркаш районне нумай çул ăнăçлă ертсе пынă. «Эпир-çке вăрçă ачисем. Аттесемпе пиччесем фронтра юн тăкнă чух тылри пĕтĕм йывăрлăх хĕрарăмсемпе пĕрле 10-15 çулсенчи ачасем çине тиенчĕ. Яваплăха çамрăклах туйма вĕреннипе нихăш ĕçе те ячĕшĕн тума хăнăхман», – пуплерĕ курткина хывса çакнă май Алексей Петрович.

Эпир пӳрте кĕнĕ чух кил хуçи арăмĕ Римма Михайловна кăмака умĕнчен уйрăлманччĕ-ха.

– Вăрçă çулĕсенче иртнĕ ачалăхра тата Тăван çĕр-шыва юхăнчăкран ура çине тăратнă яшлăхра хам 80 çул тултарăп тесе шутламан та. Ун пирки калаçма тĕрĕссипе пирĕн вăхăчĕ те пулман. Халĕ вара çак сумлă юбилее те паллă тăвас кăмăл пур, – терĕ пулăшма килнĕ тăванне кăмака умĕнче хăварса пирĕн патăмăра тухнă орденçă-ветеринар.

Красноармейски районне кĕрекен Алманч салинче 5 ачаллă çемьере çуралса ӳснĕ (1931 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕ) Римма, хаяр вăрçă çулĕсенчи воспитанипе-ши, хăйĕн пурнăçне сывлăх хуралçин ĕçĕпе çыхăнтарасшăн пулнă. Эпир шутлатпăр пулсан та шăпамăр пурнăçа улшăнусем кĕртетех çав. Шкул пĕтернĕ хĕр медицина училищине вĕренме кĕрсен те шăпа тени ăна Вăрнарти ял хуçалăх техникумне ветеринари уйрăмне илсе çитерет.

**ЯЛТАН ЯЛА – ЛАШАПА**

– Выльăх тухтăрĕ те сывлăх хуралçи тесе шутлатăп. 1948 çулта Шетмĕпуç ял тăрăхне килсе ĕçе вырнаççан çакна яр уççăн ăнланса илтĕм. Темĕн тĕрлĕ чир пурччĕ выльăхсен. Ветеринари участокне 6 пĕчĕк колхозпа 22 ял кĕретчĕ. Мирлĕ сывлăшпа сывласа янă ял çыннисем выльăх-чĕрлĕх, кайăккĕшĕк ытларах усрама тăрăшатчĕç. Анчах колхозсенче зоотехник-ветеринар пулманран выльăх сывлăхне пăхса тăрасси йăлтах пирĕн çине тиенетчĕ. Ялтан яла лаша утланса та, урапа-çунапа та çӳреттĕм. Выльăхсен кукша чирĕ тăнран яратчĕ. Мĕн кăна тумарăмăр пулĕ унпа кĕрешсе? Вакцина тухсан çеç парăнтартăмăр ăна, – аса илчĕ вăрçă хыççăн ял хуçалăхне ура çине тăратма йывăр пулнине Р. Петрова.

Вăл каласа панинчен вăрçă хыççăнхи çулсенче выльăх йышĕ пысăкланнăран вĕсене тăратма вырăнĕ те хĕсĕкрех пулнă фермăсем ума тухрĕç. Ĕнесем начар пулнăран пăрулассипе аптăранă тĕслĕхсенче ял çыннисем Римма Михайловнăна мунча кĕнĕ çĕртен хĕл кунĕнчех уй урлă чĕнсе кайни паянхи çамрăксемшĕн тĕлĕк евĕр кăна. Анчах çавăн пек вăхăтсем пулнă...

Ял çыннисен сывлăхĕпе пурнăçне ырă енне улăштарассишĕн тимленĕ ветеринар килте те выльăх-чĕрлĕх, кайăккĕшĕк сахал мар тытнă. Кил хуçалăхĕ ял хĕрринче тата юхан шывпа юнашар пулнăран Петровсем хуркăвакал, чăх-чĕп усрассипе пĕрре те алă усса ларман. 40 хур, 50-60 кăвакал усрани те пулнă вĕсен хăйсен хуçалăхĕнче. «Хамăр тĕслĕхпе эпир çынсене хур-кăвакала мĕнле пăхмаллине вĕрентеттĕмĕр. Кун пек чухне çеç вĕсенчен тĕплĕнрех ыйтма пулать, – тет паян юбилее хатĕрленекен ĕç ветеранĕ. – Йывăр çулсенче пуçăннă ĕçе паян та пăрахмастпăр. Пысăк выльăхсемех усрамастпăр пулин те килти хушма хуçалăхра сурăхсем, чăхчĕп тытатпăр. Пахчари пуянлăхпа пĕрлех çу кунĕсенче 60 сотка çĕр çинчи утăна çулса пуçтаратпăр. Вăй çитнĕ таран ĕçлетпĕр. Анкартинче çĕр улми те, кишĕрĕ-суханĕ те, купăстипе хăярĕ те çителĕклех. Ĕçлесен пулать».

Хăй вăхăтĕнче хĕвелтен иртерех колхоз фермине çитме вăй тупнă ветеринарăн ялта кĕмен кил юлман та пулĕ. Пĕр киле çулталăкне 2-3-4 кĕни те хăй ĕçне ветеринарипе çыхăнтарнă хĕрарăмшăн кун йĕркинчи ĕçлĕ çул çеç пулнă. Ывăнман вăлуншăн. Ĕç пăрахмасăрах вĕсем Алексей Петровичпа **(сăн ӳкерчĕкре)** Ларисăна çуратса ӳстерсе пурнăç çулĕ çине кăларнă. Паян икĕ мăнукĕн çемйине вĕсем ватлăхри телей тесе йышăнаççĕ.

**А. БЕЛОВ.**

## Тăпра типмен пулсан

– Çĕр типсе çитмесĕр пахча тăрăх утталасан тăпра хытать. Хĕл хыççăн тымарсене вăй илме сывлăш çитмест.

– Тăпра пиçсе çитнине çапла пĕлме пулать: ывăçпа чăмăртанă тăпрана çĕре пăрахсан вăл вĕтĕ муклашкасене пайланать.

Пахчаçă сĕнĕвĕсем

## Улмуççи сыпма вăхăт



Çуркунне вăй илнĕ вăхăт. Улма-çырла йывăççисен сĕткенĕ те активлă куçма пуçларĕ. Çавна май турат е вулă çинчи хупă пĕр чăрмавсăрах лайăх сĕвĕнет. Çакă улмуççисем сыпмалли чи лайăх вăхăт. Ку ĕçе папаксем çулçă кăлариччен пурнăçлама тăрăшмалла.

Пахчара улмуççисен сорчĕсем çителĕксĕр тесе шутлатăр пулсан кун пирки тӳрех пăшăрханма кирлĕ мар. Шăшисем ытларах кăшласа сусăрлатнă улмуççисене те, вăрман улмуççийĕсене те пĕрешкелех сыпма пулать. Сыпмалли мел вара тĕрлĕрен.

Пĕрин çинче чарăнса тăрар-ха. Улмуççи вуллин сиенленнĕ е вăрман улмуççин çӳлти пайне çивĕч ал пăчкипе пĕр тикĕс касса илмелле те çивĕч çĕçĕпе туна варрине 3 – 3,5 см таранăш çурăк тумалла. Сыпмалли сапанăн аялти пайне икĕ енчен касса савăл евĕр пĕр тикĕс шĕвĕртмелле. Хатĕр сапана çийĕнчех янтăланă çурăка асăрханса вырнаçтармалла. Каснă вырăнсем тачă пĕрлешчĕр тесе тимлемелле.

Вулă çинчи çурăка икĕ сапан вырнаçтарма та юрать **(ӳкерчĕкре)**. Вĕсем ӳссе аталанма пуçласан чи çирĕппине, сыввине малалла кайма çул парса теприне касса пăрахма та пулать.

Ĕçе пурнăçланă чух тасалăхпа тирпейлĕх çинчен манма юрамасть. Сыпма усă курмалли сапансене, çавăн пекех вулăна та лайăх çуса тасатмалла. Сыпма хатĕрленĕ сапансене каснă вырăнтан алăпа тытма юрамасть. Ĕç хатĕрĕсем çивĕч те таса пулмалла.

Çакна та каласа хăваратăп. Сыпнă сапансем çурхи ăшăпа типсе ан кайччăр тесе сыпнă сапансене полиэтилен хутпа тирпейлĕ чĕркесе çыхса лартмалла. Е тата сапансем типсе каясран тин çеç сыпнăскерсене полиэтилен калпаксемпе витмелле. Çамрăк хунав аталанма пуçласан пленка вĕçне уçмалла. Тепрер эрнерен ăна сыпнă сапан çинчен яланлăхах илмелле.

**А. ШАРИКОВ,**
**пахчаçă.**

Тереç ялĕ.

## Помидор куçаратпăр

Помидор калчине урамри çанталăка хăнăхтармалли вăхăт. Çакна валли çу уйăхĕн ăшă кунĕсенче помидор калчине малтан темиçе минутлăха, кайран ытларах та хĕвел ăшшине кăлармалла. Вĕсене теплицăсене е парниксене куçарса лартма тăпрари температура 15 градус ăшă пулмалла. Тепĕр чух калчана йăрансем çинче пластик кĕленчесемпе витнине те асăрхама пулать. Хамăн опытра эпĕ юлашкинчен калани хаклă теплицăсенчен нимĕнпе те кая юлманнине асăрхарăм. Сивĕсем пулас пулсан кун пек чух пластик кĕленчесене пысăкраххипе витетĕп. Сивĕ вăйлăрах пуласси куç кĕрет пулсан çиелтен шăналăкпа картлани те ытлашши пулмасть.

Ан манăр, сивĕ каçсем хыççăн ирлесех 40 градуса çити ăшăтнă шывпа шăварни вырăнлă. Кун пек тусан сивĕ каçсем хыççăн ăшша юратакан помидор калчин тымарĕсем лайăх аталанма пуçлаççĕ.

**В. ДАДЫКИН, ученăй агроном.**

# Çу уйăхне кĕтĕмĕр

Çанталăка сăнакансем валли

Çу уйăхĕнче икĕ сивĕ: пĕри – çĕмĕрт çеçкене ларнă чух, тепри – юман çулçă сарнă чух. Çу уйăхĕ сивĕ килсен çулталăк тырă-пулăллă пулать. Çурхи çумăр тыр-пула çитĕнме вăй парать. Çу уйăхĕ çумăрлă пулсан пучах тулли пулать. Çурхи курăк выçнисене тăрантарать. Çу уйăхĕнчи сивĕ куççуль кăлараймасть. Сивĕ тата çиллĕ çу уйăхĕ тыр-пулшăн усăллă. Çумăр вăхăтĕнчи вăйлă çил лайăх çанталăк пуçланасса. Çу уйăхĕ вăрмансене илем кӳрет, хăнана чĕнет. Тăпран çиелти сийĕпе шыв лупашкисем питĕ хăвăрт типсен вăйлă çил тухма пултарать.

Çурхи кун çулталăк тăрантарать теççĕ. Пысăк кашăкпа çиес тесен пысăкрах сухапуç тытма ан ӳркен. Суха тунă чух алăпа хăлаçланса тăмаççĕ. Тăпра таса алăна юратмасть. Çĕре хăв пуç таймасан вăл сана пырса пуç таймĕ. Йĕпе-сапара акса типĕре пуçтар. Çанталăк пăсăлас умĕн каç енне ăшăтса ярать.

Çурхи малтанхи аслати хыççăн çанталăк ăшăтать. Пилеш кая юлса чечеке ларсан кĕр вăраха юлса пуçланать. Хурăн çирĕкрен маларах çулçă сарсан ăшă та лайăх кунсене кĕт, енчен те çирĕк хурăнран маларах сарăлсан çуллахи кунсем сивĕ те йĕпе-сапаллă пулĕç. Çирĕк ытла ир чечекленсен сивĕ таврăнма пултарать. Ăвăс чечекленсен кишĕр акма вăхăт, çĕмĕрт чечеке ларсан çĕр улми лартма хушнă, хурăн çулçи сарăлсан сĕлĕ акаççĕ, юман çулçă кăларсан тулă акмалла. Йывăçсемпе тĕмсем лартмалли чи лайăх вăхăт – шĕшкĕ чечекленме пуçланипе хурăн çулçă сарнă хушăра. Çумăр хыççăн асамат кĕперĕ амалансан çумăр урăх çумасть. Çурхи малтанхи аслати мĕн тери хăватлăрах кĕмсĕртетет, тыр-пул çав тери тухăçлă пулмалла. Çуркунне хурăн шывĕ нумай юхни çумăрлă çанталăка систерет. Çĕмĕрт ир çурăлсан çуллахи кунсем ăшă пулаççĕ. Хурăн мĕн тери васкаса çулçă сарать, çавăн пек ăшă çанталăк амаланать.

Тăрна йăвине айлăм вырăнсенче çавăрсан тырра нӳрĕ лапамсенче те акма юрать, енчен те çӳллĕрех вырăнсенче çавăрсан нӳрĕ лапамсене акнă тырă çĕрсе кайĕ. Кайăк кăвакалсем йăвисене шыв çывăхне çавăрсан çу кунĕсем типĕ пулмалла, шывран катарах, çӳллĕрех вырăнсене пулсан – çумăрлă çанталăка. Вăрман кайăкĕсем йăвисене кăнтăр енчи хĕвеллĕрех вырăнсене çавăраççĕ пулсан çуллахи кунсем сивĕ килеççĕ. Шăпчăксем çĕрĕпех юрласан – типĕ çанталăк пуçланасса. Вĕсем çу уйăхĕн иккĕмĕш вунă кунлăхĕнче юрлама тытăнаççĕ. Кун пуçлаканни – чĕкеç, каç пуçлаканни – шăпчăк. Текерлĕк каçхине тĕвиклетсен – тăрă та типĕ çанталăка. Çумăр вăхăтĕнче сасартăк тӳпере кайăксем юрлама тытăнсан çумăр чарăнасса кĕт.

Уяр, типĕ çанталăк умĕн ĕне нăрри нумай тухать. Ыр кун пулас умĕн çĕрле çутă хуртсем йăлтăрккан çутатаççĕ. Вăйлă, вăраха пыракан çумăр умĕн кăткăсем хăйсен йăвине çӳллĕрех типĕ вырăна куçараççĕ. Пыл хурчĕсем иртенпех хаваслă вĕçме пуçăнсан хĕвеллĕ лайăх кун пуласса. Аслатиллĕ çумăр пĕлĕчĕсем тӳпене хупăрласа илсен те пыл хурчĕсем чечексем çинче «ĕçлеççĕ» пулсан çумăр пур пĕрех пулмĕ. Шĕшкĕпе хĕрлĕ хăва чечекленсен вĕллесене уçса кăлараççĕ.

**Чăваш календарĕнчен.**

Кролик ĕрчетер

# Йыш хушасса кĕтетпĕр

***Эпĕ нумаях пулмасть кролик туянтăм, анчах та ăна мĕнле ĕрчетмеллине пĕлместĕп. Çавăнпа та хаçат вулакансен сĕнĕвĕсемпе паллашас килет.***

**Н. СЕМЕНОВ.**
**Катькас ял тăрăхĕ.**



Халĕ шăпах кролика пĕтĕлентерсе йыш хушмалли вăхăт. Симĕс курăк татас тапхăр тĕлне кролик çурисем аталанаççĕ, амăшĕпе пĕрле тĕрлĕ витаминпа пуян ешĕл апат çиме хăнăхаççĕ.

Кролик амине пĕтĕлентерес умĕн ытлашши самăртма кирлĕ мар, унсăрăн çăвăр илес пахалăхĕ чакать. Аçана вара çак тапхăрччен апат ытларах çитерме те юрать. Тĕрĕс-тĕкел аталаннă амана пĕтĕленме вăхăт нумай та кирлĕ мар. Кролик ĕрчетекенĕн çырса пыма ятарлă журнал пулмалла. Журнал çине пĕтĕленнĕ куна çырма ан манăр. Пĕтĕленнине тĕрĕслеме тепĕр эрнерен ама читлĕхне аçа кĕртсе ярăр, анчах та нумай вăхăтлăх мар. 16 – 20 кунран ама хырăмне ерипен тытса пăхăр, сирĕн алла пĕчĕк муклашкасем лекеççĕ. Анчах та çакна пурте пĕлеймеççĕ. Пĕтĕленнĕ ама апат ытларах çиме пуçлать. Виçĕ эрне çитсен ама читлĕх урайне чăрмалама пуçлать, çапла майпа вăл çӳп-çапа тасатать, йăва çавăрма вырăн хатĕрлет. Ăна валли çăварĕпе утă, улăм пуçтарать, хăй кĕлетки çинчен мамăк татса хатĕрлет. Кролик пĕр уйăхран йыш хушать.

**З. МАКАРОВА.**

# «Çĕр те, пĕлĕт те çунатчĕ»



«Муркаш ял тăрăхĕнче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă 6 ветеран пурăнать. Вĕсен шутĕнче нумаях пулмасть пирĕн ял тăрăхне пурăнма куçса килнĕ Николай Алексеевич Стрельцов та», – каласа парать ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Никитин. Иртнĕ кунсенче ветеран патне çитсе курса калаçма май пулчĕ.

Рязань облаçĕнче пурăннă Николай Алексеевич Шаптак ялĕнче кăçал хĕлле пурăнма тытăннă. «Патшалăх пулăшăвĕпе усă курса ялта пурăнма майсем шырарăм. Шупашкарти ывăл пулăшрĕ. Халĕ акă Муркаш тăрăхĕнче пурăнма тытăнтăм. Килĕшет кунта», – пĕлтерчĕ вăл.

Çӳллĕ те кĕрнеклĕ арçын хаяр вăрçă çулĕсене лайăх астăвать. Астумасăр: танкра çунса хура ӳтпе туртăннă ури вăрçа манса кайма ăçтан парĕ ĕнтĕ? Николай Алексеевича 17 çултах çара илнĕ – 1942 çулхи ноябрь уйăхĕнче. Тепĕр çулхине ăна Курск пĕкки «кĕтсе илет».

«Пирĕнтен, пулеметчиксенчен, тракторпа кайма пĕлекеннисене суйласа танксем çине лартрĕç. Тăшманăн хĕç-пăшалĕ те вăйлăччĕ, салтакĕсем те вĕреннисем пулнă. Пирĕн вара салтаксене вĕрентме мар, вĕреннĕ командирсем те сахал пулнă вĕт. Пирĕн гранатометсем танксене витĕр çунтарни хытă пулăшатчĕ тата тыл вăйлă пулни. Эпир çак енпе фашистсенчен вăйлăрах пулнă», – каласа парать ветеран манăçми самантсем çинчен.

Июль уйăхĕнче Прохоровка сали патĕнче хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Шăпах çавăнта Николай Алексеевичăн танкне снаряд лекет, танк çунма тытăнать, салтака снаряд ванчăкĕ тивет. Контузи пулнăран вăл танк ăшĕнчен тухаймасть, ури те çакланса ларать...

«Хыççăн мĕн пулнине хам астумастăп. Танк ăшĕнчен мана санитаркăпа радистка кăларнă. Брезентпа хамăрăннисем патне туртса çитернине, госпитале леçнине кайран вĕсем каласа пачĕç. Хăрушă пулнă: çĕр те çунатчĕ, пĕлĕт те çунатчĕ», – çав вăхăта куç умне кăларса Николай Алексеевич пĕр хушă шăпланчĕ. Куçĕ шывланчĕ.

Вырăс салтакĕн чылай хушă госпитальте сипленме тивет. Унтан тухнă тĕле вара çарта шăпах 1925–1926 çулсенче çуралнисене çар училищисенче вĕрентессипе тимлеме пуçлаççĕ. Николай Алексеевич та курсантсен ретне тăрать: Аслă Çĕнтерӳ пирки çар мотоциклет училищинче ăсталăха туптанă чухне пĕлет.

**Н. НИКОЛАЕВА.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**


**ООО «Металл-строй» изготавливает и продает теплицы разных размеров, банные печи, профнастил, сетки-рабицы, кованные заборы, ворота, трубы разных диаметров и т. д. Тел.: 8-937-390-73-51. Адрес: с. Моргауши, ул. Заводская, д. 14 (бывший плодоовощной комбинат). 2-5.**

**Продаем картофель-мелочь и пресс-подборщик «Киргизстан» в рабочем состоянии по договорной цене. Тел.: 8-927-851-86-45, 8-927-857-55-69.**

**Продаю: гравмассу, щебень, песок, керамзит, торф с доставкой. Скидки. Тел.: 8-927-668-70-15. 6-12.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 1-5.**

**Продается ячмень, пшеница. Недорого.**
**Тел.: 8-917-668-33-03, 8-960-305-18-48.**

## ООО «ВИВАТ»

**Изготовление высококачественных деревянных окон типа «Евро» и ОСП на заказ по самым низким ценам в Чувашии. Сертифицировано. Гарантия до пяти лет на лакокрасочные материалы.**
***Замер, установка, монтаж откосов.***
***Магазин «Окна и двери» на ул. Чапаева, д. 37/1.***
**Тел.: 8(83541)62-5-86, 8-917-67-94-733.**
**Деревянные окна – символ достатка, престижа и хорошего вкуса! 2-5.**

## ИП Иванов В.И.

**Изготовление высококачественных пластиковых окон на заказ по самым низким ценам в Чувашии. А также межкомнатные и металлические двери. Продукция сертифицирована. Гарантия.**
***Замер, установка, монтаж откосов.***
***Магазин «Окна и двери» на ул. Чапаева, д. 37/1.***
**Тел.: 8(83541)62-5-86, 8-917-67-94-733. 2-5.**

салон продаж
ПОТАП




москитная сетка в подарок!
стоимость окна 5995 рублей
установка 1250 рублей
установка "под ключ" 1500 рублей
материалы "под ключ" 3450р.
Акция! скидки
- мебель до 33%
- двери входные до 10%
- двери межкомнатные до 17%
- окна до 40%
Срок изготовления 7-10 раб.дней!
*подробности на www.potap.su*
с.Б.Сундырь, ул. Новая, 8
69-3-25, 8-906-387-37-44
**позвоните к нам и ждите дома!**
**мы приедем**
**69-3-25**

**БЕТОН, РАСТВОР любых марок.**
**Тел.: 38-87-78, 8-927-66-88-778.**
**Песок, ОПГС (гравмасса), щебень.**
**Тел.: 38-84-40, 8-927-66-88-440.**
**Доставка миксерами, самосвалами. 14-50.**

В Москву и Московскую обл. требуются: фасовщицы-упаковщицы,грузчики (кондитерские фабрики, молочное производство, снековая продукция, мясокомбинаты, склады).
Питание, проживание предоставляются. Вахта. З/п от 20000 руб. (сдельная).
Тел.: 8(8352)23-22-22. 5-5.

www.0710.ru
Служба Памяти® помощь важнее слов ЗАО «ВМК»
**ПАМЯТНИКИ • РИТУАЛЬНЫЕ УСЛУГИ**
Скидка на памятники до 70 %*
круглосуточно 0710** 8 800 200 0710***
с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4
Дом Быта (I этаж)
Военно-мемориальная компания.
Тел.: 62-7-30, 8-917-653-55-97
*С перечнем памятников, на которые распространяется скидка, и прейскурантом цен можно ознакомиться в точке продаж с. Моргауши по указанному адресу.
ОГРН 1027700186150 **Звонок с мобильного телефона. Стоимость с НДС 6 руб/мин. ***Звонок бесплатный.
® Правообладателем товарного знака является ЗАО «ВМК»

**Продаю отрубь, доставка, недорого. Тел.: 8-906-384-48-30, 8-927-990-39-08. 3-5.**

**Продаю: металлочерепицу импортную, отечественную гибкую черепицу, профнастил кровельный, стеновой, сайдинг импортный, отечественный, гидро-, пароизоляция. Консультация, замер, расчет, доставка, монтаж, скидки. Без выходных. Тел.: 8-917-658-84-56, 8-927-665-37-68. 2-5.**

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА И ДВЕРИ**
заводское производство
○ КОНСУЛЬТАЦИЯ
○ ЗАМЕР
○ ДОСТАВКА
○ УСТАНОВКА
СКИДКИ! ПОДАРКИ!
**ТЕЛ.: (8352) 48-73-44**
**8-908-302-19-12**


## Прогноз погоды с 7 по 13 мая

www.yandex.ru

| сб 7 | вс 8 | пн 9 | вт 10 | ср 11 | чт 12 | пт 13 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| ясно | ясно | облачно | переменная облачность | облачно | облачно | облачно, небольшой дождь |
| +18 | +19 | +18 | +17 | +9 | +10 | +10 |
| +6 | +9 | +9 | +5 | +3 | +4 | +3 |

## Пĕлтерӳсем. Объявления


**Отруби, комбикорма, ячмень. Доставка от 1 т. Тел.: 89603013479. 2-5.**

* * *

**Проекты зданий и инд. домов, электро- и газоснабжения, сметы. Свид. СРО. ООО «Инттехс». с. Моргауши, ул. Мира, 9А. Тел.: 62-6-03. 2-5.**

* * *

**Продаю теплицы от производителя: 3мх4м, 3мх6м, 3мх8м, 3мх10м и т. д. Тел.: 8-903-322-45-77. 8-8.**

* * *

**Пăсăрман магазинне хирĕç вырнаçнă 6 гектар çĕре арендăна паратпăр (çул хĕрринче). Тел.: 8-927-850-47-17.**

* * *

**Продаю песок, гравмассу, бой кирпича, керамзитоблоки, с доставкой. Тел.: 67-66-95, 8-905-347-99-15. 1-5.**

* * *

**Дорого покупаем волосы – до 80000 руб. за 1 кг. 13 мая (в пятницу) с 9-00 до 15-00 часов в Доме быта, парикмахерская , 2 этаж.**

* * *

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы.**
**Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 1-8.**

* * *

**Продаю рассаду виктории, недорого.**
**Тел.: 8-909-301-78-05.**

* * *

**Продаю семена картофеля, пшеницы, ячменя, фураж, продовольственный картофель.**
**Тел.: 8-905-199-61-77.**

* * *

**Продаем: блоки керамзитобетонные, пенобетонные, тротуарную плитку, сетку-рабицу. Качественно, недорого. От производителя ООО «Промсварка».**
**Тел.: (8352)36-01-03, 36-01-06. 3-5.**

* * *

**Отдам собаку для сторожевых целей в хорошие руки. Тел.: 8-927-862-76-58.**

* * *

**Продаю самодельный минимопед (мопик) за 1500 руб., косилку сегментную для мотоблока за 3000 руб., кирпич одинарный красный б/у 2 руб. 50 коп. за 1 шт., щебень кирпичный – 500 руб. за куб. м. Тел.: 8-905-340-19-25, 61-2-35.**

* * *

**ОАО племзаводу «Большемурашкинский» Нижегородской области требуются строительные бригады на срок от одного до четырех месяцев.**
**Звонить по тел.: 8-831-675-73-86, 8-910-899-52-50.**

* * *

**ООО «Строитель» реализует керамблоки пропаренные. Обращаться по тел.: 63-1-19, 69-8-59. 2-4.**

* * *

**Продаем: асфальт, торф, песок (речной, карьерный), ОПГС (гравмасса), щебень (гранитный, известковый), керамзит. Тел.: 8-903-358-22-24, 8-905-343-91-07, 44-22-24. 5-5.**

* * *

**Продаю семенной картофель (сорт «Удача») по цене 25 рублей за килограмм.**
**Тел.: 8-917-679-47-33, 8-909-303-25-87. 2-2.**

* * *

**Продаем доски: обрезные, необрезные, брус любого сечения, срубы из оцилиндрованного бревна. Доставка бесплатно. Тел.: 8-919-679-18-11. 2-5.**

* * *

**Май уйăхĕнче пĕрремĕш пăруламалли тынашки сутатăп. Тел.: 8-905-028-20-23.**


Администрация Моргаушского района выражает глубокое соболезнование Семенову В.И., председателю СХПК ПЗ им. Е. Андреева, по поводу безвременной кончины брата
**СЕМЕНОВА**
**Леонида Иосифовича.**

Администрация Моргаушского района и Моргаушское районное Собрание депутатов пятого созыва выражают глубокое соболезнование Цареву Н.Л., председателю СХПК «Передовик», депутату районного Собрания депутатов, по поводу безвременной кончины
**ЦАРЕВОЙ**
**Алевтины Борисовны.**

Отдел культуры и архивного дела администрации Моргаушского района, райком профсоюза работников культуры Моргаушского района, МУК «Моргаушская межпоселенческая центральная библиотека Моргаушского района» выражают глубокое соболезнование Семеновой В.И., библиотекарю межпоселенческой центральной библиотеки, по поводу безвременной кончины брата
**СЕМЕНОВА**
**Леонида Иосифовича.**

Совет, правление и коллектив Большесундырского райпо выражают глубокое соболезнование заведующей Б.-Карачкинским магазином «Продукты» Беловой С.М. по поводу смерти сына
**РОМАНА.**

В.И. Чапаев ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх кооперативĕ Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăх ертӳçин В.И. Семеновăн шăллĕ
**Леонид Иосифович**
**СЕМЕНОВ**
вăхăтсăр вилсе кайнă пирки тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**
**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.**
**ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**
**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**
**Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.**
**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**
**Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.**
**Пичете панă 06.05.2011 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 4337.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.